*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

2 (2640) №
Хакĕ ирĕклĕ

# Хресчен сасси

2017
кăрлач
19

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

## Чăваш Ен Пуçлăхĕ Çырупа паллаштарать

Ыран 12 сехетре Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне яракан çулленхи Çырупа паллаштарать. Мероприятие тÿрремĕнех Наци телекуравĕпе, Наци радиовĕпе тата ЧР влаç органĕсен официаллă порталĕнче трансляцилесçĕ.

Çырура регион ертÿçи Чăваш Ен аталанăвĕн, Патшалăх Канашĕн, вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен малашнехи çулйĕрне палăртĕ.

Документа хатĕрленĕ чух республикăра пурăнакансен, общество организацийĕсен сĕнĕвĕсене те шута илнĕ.

УЯВ

# Сăмах пултăр витĕмлĕ!

**Кăрлачăн 14-мĕшĕнче Чăваш патшалăх филармонийĕнче республикăри журналистсем, кĕнеке-хаçат кăларакансем тата полиграфистсем хăйсен уявне палăртрĕç. Пичет ĕçченĕсемпе ветеранĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ăшшăн саламларĕ, çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçусем сунчĕ.**



Сăнÿкерчĕке сар.ru сайтран илнĕ

«Массăллă информаци хатĕрĕсенче пултаруллă, тÿрĕ кăмăллă, хăйсен профессине чунпа парăннă çынсем, чăн-чăн патриотсем ĕçлемелле. Шанатăп, республикăри медиаусăхра шăпах çакнашкал çынсем тăрăшаççĕ те», – терĕ вăл. Вырăнти массăллă информаци хатĕрĕсем яланхиллех социаллă пĕлтерĕшлĕ миссие пурнăçланине те палăртрĕ Михаил Игнатьев. Вĕсем çынсене информацие кăна тивĕçтермеççĕ, кирлĕ пĕлÿ те параççĕ, общество умĕнчи çивĕч ыйтусене хускатаççĕ, влаçпа халăх хушшинче хутшăну йĕркелеççĕ.

Республика ертÿçи сăмах ăстисене 2017 çулта çитĕнÿсем тума, çĕнĕ проектсем пурнăça кĕртме ырă суннă май: «Ытларах лайăх, витĕмлĕ хыпарсемпе савăнтарăр», – терĕ.

Иртнĕ çул пичет отраслĕнче те пĕлтерĕшлĕ пулăмсем чылай пулнă. Сăмахран, «Хыпар», «Тантăш», «Республика», «Хресчен сасси» хаçатсем тата Патăрьел, Куславкка, Комсомольски, Вăрмар, Пăрачкав районĕсен хаçачĕсен редакцийĕсем юбилейĕсене палăртнă. Кăçал вара «Советская Чувашия» хаçат 100 çулхи юбилейне уявлĕ. ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Александр Иванов кăçалхи çуркунне Наци телекуравĕн тата радиовĕн кăларăмĕсене спутник урлă трансляцилессине пĕлтерчĕ. Çавна май Чăваш телекăларăмĕсене пĕтĕм тĕнчипех пăхма пултарĕç.

Пичет ĕçченĕсене çавăн пекех ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Валерий Филимонов, Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн секретарĕ Николай Малов, Чăваш журналисчĕсен союзĕн председателĕн заместителĕ Анатолий Данилов саламларĕç.

Ĕçре палăрнисене уявра тĕрлĕ наградăпа хавхалантарчĕç. «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята Елчĕк районĕн «Елчĕк ен» хаçачĕн тĕп редакторĕ Николай Алексеев тата Вăрмар районĕн «Хĕрлĕ ялав» хаçачĕн тĕп редакторĕ Зинаида Павлова илчĕç. Хисепе тивĕçнисен йышĕнче «Хыпар» Издательство çурчĕн ĕçченĕсем те пурри савăнтарать: система администраторне Нина Ивановăна ЧР Пуçлăхĕн Тав çырăвĕпе, «Хресчен сасси» хаçат редакторне Валентина Петровăна ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хучĕпе чысларĕç. «Хыпар» хаçатăн политика, вырăнти хăйтытăмлăх пайĕн редакторĕ Николай Коновалов – коррупципе кĕрешес енĕпе ирттернĕ, социаллă пурнăç пайĕн тишкерÿçи Роза Власова Ĕç сыннин çулталăкне пĕтĕмлетсе йĕркеленĕ конкурссенче çĕнтернĕ. Вĕсем дипломсене, хаклă парнесене тивĕçрĕç.

Чăваш журналисчĕсен Çемен Элкер премине кăçал Чăваш наци телерадиокомпанийĕн радиохыпарлав редакторне Владимир Егорова тата «Чăваш Ен» Чăваш патшалăх телерадиокомпанин «Чебоксары ТВ» студин шеф-редакторне Ольга Петровăна пачĕç. «Çамрăксен хаçачĕ» штатра тăман корреспонденчĕ Альбина Любимова-Юрату Николай Никольский премийĕн лауреачĕ пулса тăчĕ. Леонид Ильин премине Патăрьел районĕн «Авангард» хаçачĕн экономика пайĕн редакторĕ Ольга Павлова тивĕçрĕ.

**Валентина МАКСИМОВА.**

ÇĔР ПИРКИ – ÇĔР ЫЙТУ

# Сахалли те япăх, ытлашши те сиенлĕ

*Çĕр-аннемĕр хăйне пăхнине килĕштерет. Пулăхсăр уй-хирте пысăк, паха тухăç илеймĕн. Çут çанталăк пурлăхĕпе усă куратпăр пулсан ăна тав тума та пĕлмелле. Чăваш Енри патшалăх центрĕн агрохими службин Красноармейски районĕнчи ертсе пыракан специалисчĕ* ***Надежда Леонидовна АЛЕКСАНДРОВА*** *çĕр ĕçĕнчи çивĕч ыйтусене хускатать.*

– Нумайăшĕ çĕре минерал удобренийĕ хывнипех тухăçа, пулăха ÿстерме пулать тесе шухăшлать. Анчах ÿсентăрана лайăх аталанма микробактерисем кирлĕ, вăл вара органика удобренийĕнче (сидерат, улăм, тислĕк) кăна пур. Ĕне вылăх тислĕкĕ çĕршĕн уйрăмах паха. Юлашки вăхăтра майракаллă шултра вылăх йышĕ чакнипе хуçалăхсем сидерат, нумай çул ÿсекен курăксене ытларах акма тытăнчĕç. Сăмахран, ешĕл клевера сухаласа çĕре хывни органика шайне пысăклатать. Унăн тымарĕнчен тухакан сĕткен тăпрана сыватать, пулăхне ÿстерет.

2-мĕш стр. ➔

КУН ЙĔРКИНЧЕ

## Çĕнĕ тытăма куçма хатĕр

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускаври ĕçлĕ çулçÿреврe РФ çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕпе Сергей Донскойпа тĕл пулнă. Вĕсем Раççейри Экологи çулталăкĕнче пурнăçа кĕртмелли мероприятисене сÿтсе явнă. Çак шутра – йăла тата производство каяшĕсене пĕтермелли тытăма çĕнетесси.**

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – регионта каяшсене тирпейлесе утилизацилес ĕç комплекслă пулса пырать. Экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтерекен темиçе проект ăнăçлă пурнăçланать. Шыв тасатмалли сооруженисене тĕпрен юсасси тата Çĕнĕ Шупашкарта хытă каяшсене тирпейлекен çĕнĕ полигон тăвасси малашне РФ Правительстви çирĕплетнĕ мероприятисен планĕпе килĕшÿллĕн пурнăça кĕрсе пырĕ. Унсăр пуçне Питтукасси сывăхĕнчи çÿп-çап купине пĕтермелли ĕçе федераци программине кĕртнĕ.

Тĕлпулура (унта ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Александр Коршунов та хутшăннă) Михаил Игнатьев республика каяшсене тирпейлессипе çыхăннă çĕнĕ тытăм çине 2017 çулта куçма хатĕррине палăртнă.

РФ çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Сергей Донской проектсем пурнăçа кĕнипе паллашма Чăваш Ене çитсе курасси çинчен пĕлтернĕ.

## Академи пулăшăвĕпе

**Швецири "Кеннет" компани Чăваш Республикинче 2013 çултанпа ĕçлет. Унăн тĕп директорĕ Кеннет Хульт палăртнă тăрăх – вăл хăйĕн ĕçтешĕсемпе пĕрле Çĕмĕрле тата Элĕк районĕсенчи ял хуçалăх çĕрĕ çинче тырпул ÿстерет.** Хальччен усă курман лаптăксене пусă çаврăнăшне кĕртет. Çĕнĕ йышши техникăпа, технологисемпе усă курса швецсем тĕштырă тухăçне пĕр гектартан 40 центнер таран ÿстересшĕн. Çакна пурнăçа кĕртме вĕсене Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ пулăшма хатĕр.

Иртнĕ эрнере ют çĕршыв инвесторĕсем вĕренÿ заведенийĕн ертÿçисемпе, агрономи енĕпе пĕлÿ пухакан студентсемпе тĕл пулнă, пĕрле хутшăнса ĕçлемелли майсене сÿтсе явнă. "Çĕр ĕçĕнче ăслăлăха шута илни пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа эпир мĕнпур лаптăкри тăпра пахалăхне тĕпчесшĕн, ку тĕлĕшпе ятарлă карттă йĕркелесшĕн, малашне специалистсен, консультантсен сĕнĕвĕсене тĕпе хурса ĕçлесшĕн", – палăртнă Сайфул Мазумдер директор.

Академин виççĕмĕш курс студенчĕсем производство практикине "Кеннетра" иртерĕç, вĕренсе тухакансем кунта стажировкăна килĕç. Çамрăксене хуçалăхра çак çуркуннех кĕтсе илме хатĕр – пурăнма тата ĕçлеме условисем туса панă.

Палăртмалла, чылай тĕпчеве "Кеннет" пĕрлешÿ академи никĕсĕ çинче иртерессшĕн. Хăнасем асăннă тăрăх – çыхăну аван аталансан аслă пĕлÿ илнĕ хыççăн компание ĕçе вырнаçнă çамрăк специалистсем 1-2 çултан стажировкăна Швецие çула тухма та пултарĕç.

# Сахалли те япăх, ытлашши те сиенлĕ


Надежда Александрова

1-мĕш стр.

Анари сăтăрçăсенчен хăпма горчица та пулăшать. Унăн тымар сĕткенĕ хытă хурта (проволочник) пĕтерет. Пирĕн тăрăхри «Таябинка» хуçалăх кĕркунне уй-хир пушансан пулас çĕрулми лаптăкне горчица акать. Ăна кайран сухаласа çĕре хывать. Горчица, клевер, донник çĕр пулăхне ÿстереççĕ, анана сиенлĕ хурт-кăпшанкăран тасатаççĕ.

Районта çĕр пулăхне кирлĕ шайра тытса тăма çулталăкра кашни гектара 5-6 тонна тислĕк тăкмалла. Выльăх-чĕрлĕх сахаллипе ун чухлĕ тупаймăпăр. Çавăнпа хуçалăхсем кĕркунне – улăм, çулла каю уттине (20-27 см çÿллĕш çитĕнсен) вĕтетсе уй-хире хываççĕ. Агротехникăна пăхăнса ĕçленĕшĕн «Красное Сормово», «Таябинка», «Караево», «Волит» хуçалăхсемпе Шумилов, Ильин фермерсене тав тăвас килет. Вĕсем тăрăшнипе районта тухăç илесси ÿссе пырать.

Çĕрти йÿçеклĕхе йĕркелеме извеç çăнăхĕ кирлĕ. Ĕлĕкрех ăна тунянма усă курнă тăкака патшалăх саплаштарма пулăшнă. Халĕ хуçалăхсен хăйсен тăкакланмалла. Ăна пурте илейменнипе уя кали хлорĕ сахал тухать. Тăпрара вăл çитмесен чĕртавар пахалăхĕ чакать. Сăмахран, купăстаран шыв тути кăна кĕрет. Пулăхсăр çĕре тепле чаплă вăрлăх аксан та паха çимĕç илеймĕн. Çакă выльăх, çын сывлăхне тÿнтерле витĕм кÿрет.

**– Ÿсентăран отраслĕнче хими препарачĕсемпе виçесĕр усă курма пуçларĕç. Çакă хамăра ура хуниех мар-и?**

– Республикăра хими препарачĕсемпе усă курнине тĕрĕслекен организаци хуçалăх расчечĕ çине куçарса йăнăшрĕç. Унччен специалистсем хуçалăхсене çитсе хăйсемех тăпрана анализ валли илнĕ. Çакна патшалăх шучĕпе тунă. Халĕ организаци наркăмăша хăех сутни тата тĕрĕслени йĕркеллĕ мар. Укçа тÿлеме тивнипе нумайăшĕ çĕрти хими шайне тĕрĕслеттерме пăрахрĕ. Ку вара халăх сывлăхĕпе çыхăннă.

**– Организацисенче агротехникăна пăхăнса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Çапах хушма хуçалăхсенче кашни хăй пĕлнĕ пек вăй хурать.**

– Хушма хуçалăх тытса пыракансем те час-часах пиртен пулăшу ыйтаççĕ: е акнă культура шăтса тухсан сарăхнă, е вăл пач шăтман. Вĕсен çĕр пахалăхне тĕрĕслетпĕр, сăлтавне тупса ăнлантаратпăр, вĕрентетпĕр. Хушма хуçалăхра та хими хутăшĕпе, удобрение анлă усă кураççĕ. Хăш-пĕр чухне пĕлменни шар кăтартать. Акă лаша тислĕкне çулсерен 100 тонна хывсан 2-3 çултан çĕрти фосфор, кали, азот шайĕ хăпарать, ÿсентăран ÿсеймест. Пахчана йĕркене кĕртме кантăр, купăста, куккурус акмалла. Кайран – тырă, çĕрулми, помидор тата ытти те. Çавăнпа тислĕк сахал пулни те япăх, ытлашши те сиенлĕ.

**– Кĕркунне уй-хир, пахча пушансан çĕр ĕçĕ тепĕр хут вăй илет. Хушма хуçалăхсенче те çĕртме тăваççĕ. Çуркунне вара лаптăка каллех сухалаççĕ. Темиçе хут тăкакланма кирлех-ши?**

– Ана çине удобрени сахал кăларсан вырма вĕçленсенех çĕртме тума тытăнмалла. Нумай çул ÿсекен курăк лаптăкне органика удобренийĕ сапмалла. Çĕрулми, çумкурăк пусса илнĕ уя хытă хуртран, сăтăрçăсенчен тасатма сухаласа горчица акмалла. Авăн-юпа уйăхĕсенче çитĕннĕ ешĕл курăка вĕтетсе çĕре хывмалла. Унсăрăн гумус шайĕ чакать. Çавăнпа çĕртме тумаллах. Хушма хуçалăхра та кĕркунне çĕрулми анине сухаламалла. Çуркунне, çĕрулми лартнă хыççăн, ана йĕри-тавра (50 см аякках) горчица акмалла. Çакă ăна хытă хурт ересрен сыхлать. Кĕркунне пахчана тислĕк кăларсан та тÿрех сухалама тăрăшмалла. Çак ĕçе кая хăварсан унăн пахалăхĕ палăрмаллах чакать.



## Çĕрулми çителĕклĕ пулĕ

**РФ ял хуçалăх министрĕ Александр Ткачев çĕрулми селекцине аталантарассипе лару иртернĕ. Унта ЧР ял хуçалăх министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Мансур Калмыков та хутшăннă.**

Александр Ткачев палăртнă тăрăх – 2016 çулта çĕршывра 31 млн тонна çĕрулми туса илнĕ. Çав шутра 80 процентне пĕчĕк хуçалăхсенче. Шалти рынока хамăр продукципе туллин тивĕçтеретпĕр пулин те çуркунне ăна аякран турттараççĕ. Çапах çак кăтарту çулсерен чакса пырать. Иртнĕ çул Раççее 300 пин тонна илсе килнĕ. Ку унччен хи çулхипе танлаштарсан 2 хут сахалрах. Çав вăхăтрах паха вăрлăхăн 80 проценчĕ импорт шутланать. Александр Ткачев селекцие аталантарма, ку ĕçе наукăпа тĕпчев институтне явăçтарма сĕннĕ. «Тепĕр 5-7 çултан Раççейри аграрисем вырăнти вăрлăхпа усă курма пултарччăр», – тенĕ вăл.

2016 çулта Раççей ютран 18 пин тонна çĕрулми вăрлăхĕ туяннă (2015 çулта – 33 пин тонна). Хуçалăхсене вырăнта туса илекен чылай сортăн пахалăхĕ тивĕçтермест. Лайăххи вара аграрисем патне çитеймест. Рынокра та курăнмасть вăл. Хальхи вăхăтра РФ Ял хуçалăх министерстви, Ăслăлăх организацийĕсен федераци агентстви, регионсенчи АПК управленийĕн органĕсемпе çĕрулми туса илессипе, селекцие аталантарассипе хушма программа хатĕрлеççĕ. Ставрополь крайĕ, Тутарстанпа Чăваш республикисем, Ленинград, Тверь, Тамбов облаçĕсем программăна пурнăçа кĕртме хатĕррине пĕлтерне.

## Çуракине хатĕрленсе

**Республикăри хуçалăхсенче кăрлач уйăхĕн 16-мĕшĕ тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен вăрлăхне 48,9 пин тонна хывнă. Ку кирлин 100 проценчĕ. Çак вăхăт тĕлне 46,9 пин тоннине тĕрĕсленĕ. Çав шутра кондицилли 58 процент е 27 тонна.**

Хуçалăхсенче пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсен вăрлăхне тасатса типĕтессипе 98 звено ĕçлет. Патăрьел (11), Елчĕк (9) районĕсенче вĕсем самай. Шупашкар районĕнче вăрлăхăн 87 проценчĕ акма юрăхлă.



## Мĕнле хăпмалла-ши?

**Ялта çĕр лаптăкĕ пысăк. Эпир вара çуррине кăна сухаласа акса-лартса хăвармăр. Ыттине çумкурăк пусса илчĕ. Утăлăх çулса илекен те çук. Ытлашши лаптăкшăн налук та тÿлес килмест. Унран мĕнле хăпмалла-ши?**

**В. СЕРГЕЕВА.**
**Сĕнтĕрвăрри районĕ.**

Ытлашши çĕре ял тăрăхне парас тесен малтан лаптăка пай çине уйăрса харпăрлăх правине илмелле. Унтан ăна сутма, парнелеме, арендăна пама пултаратăр. Вырăнти ял тăрăхне сĕнме те ирĕк пур.

## Уйри гараж

**Пирĕн çĕр пайĕсем ялпа юнашарах вырнаçнă. Унтах çул иртет. Кÿршĕсем çакăнпа усă курса лаптăкра гараж туса лартрĕç. Халĕ ун умĕнчен машина-трактор таталмасть. Хăш чухне пирĕн лаптăка та кĕрсе каяççĕ. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр çинче гараж тума юрать-ши?**

**Михаил НИКОЛАЕВ.**
**Шупашкар районĕ.**

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр çинче продукци туса илме кирлĕ объектсем кăна тума юрать. Сăмахран, тухăçа упрама склад, ял хуçалăх техники валли гараж тата ытти те. Чĕртавар туса илессипе çыхăнман хуралтăсем вара лартма юрамасть (лавкка, автозаправка тата ытти те).



## Тухăçлă усă курма

1991 çулта совхоз-колхозсене реорганизациленĕ май ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене унта ĕçлекенсене пайласа пачĕç. 2003 çултанпа федераци саккунĕпе килĕшÿллĕн (ФЗ 101 \, 2002 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕ) пулăхлă çĕр çаврăнăшне йĕркелеççĕ. Уй-хирти çĕр пайĕсем çынсен пĕрлехи пурлăхĕ шутланать. Пысăк участокра уйрăм çыннăн куçман пурлăхĕн чиккине, вăл ăçта вырнаçнине палăртма çук. Çавăнпа хуçисем унпа тухăçлă усă курас тесен мĕн тумаллине пĕлмеççĕ. Сăмахран, арендăна парса укçа е тырпул илме.

Хальхи вăхăтра харпăрçăсем çĕр пайне унпа усă куракан ял хуçалăх организацийĕн устав капиталне хывма, пĕр-пĕр çынна шанса пама, тепĕр пай хуçине е ял хуçалăх организацине сутма, харпăрлăх правинчен хăпма пултараççĕ.

Çĕр пайĕнчен тÿлевсĕрех хăпма май пур. Çакăн пирки вырăнти нумай функциллĕ центра (МФЦ) заявлени тăратмалла.

Сутас тесен малтан çĕр пайĕ шучĕпе уйăрса чиккисене палăртмалла. Росреестрта харпăрлăх правине регистрацилемелле. Малтан пĕрремĕш черетпе туянма право пур Чăваш Республикине е муниципалитета çĕр илме сĕнмелле. Енчен вĕсем килĕшмесен е 30 кунра туянасси пирки çырса пĕлтермесен сутуçăн ыттисене сутма ирĕк пур. Анчах унăн хакĕ документра кăтартнинчен пĕчĕк пулмалла мар.

Юлашки вăхăтра ял тăрăхĕсем хуçасăр çĕрсене палăртса муниципалитет харпăрлăхне куçарассипе пысăк ĕç тăваççĕ. Харпăрçă лаптăкне арендăна паман, унпа 3 çул е ытларах та усă курман пулсан çĕр пайне хуçасăррисен шутне кĕртеççĕ.

## Сăмахăн вăйĕ çук

Чăваш Енре çĕр лаптăкĕсен чиккине официаллă майпа 40 процент çирĕплетнĕ. Ыттисен каласса килĕшнĕ чикĕ кăна, вĕсене кадастр учетне те тăратман.

Шупашкарта пурăнакан хĕрарăм суда çăхав тăратнă, кÿршин çĕр пайĕн харпăрлăх правин свидетельствине пăрахăçлама ыйтнă. Пускилĕ унăн лаптăкне хапсăннă-мĕн. Вĕсем участокĕсене Росреестра регистрациленĕ. Апла ют пахчана кĕрсе каймалла мар пек.

Федоров (хушаматне улăштарнă) сад участокĕн документчĕсене 2012 çулта тунă. Лаптăка чикĕлеме те укçа шеллемен. Кĕçех çурт, мунча туса лартнă. Юнашар пахчана вара никам та пырса çÿремен, çĕрпе усă курман. Кĕçех ăна сутнă. Çĕнĕ хуçа лаптăка чикĕлеме шутланă. Ара, документра вăл пулман. Кадастр инженерĕ хĕрарăмăн пахчи Федоров участокнех кĕрсе кайнине палăртнă. Унта вара кÿршин çурт-йĕрĕ пулнă. Айăплине халĕ тин шыраса тупаймăн. Темиçе çул каялла уя коллективлă сад валли уйăрнă чухне йĕркеллĕ висмен. Чикĕсене патак лартса палăртнипех çырлахнă. Вăхăт иртнĕ май дача хуçисем чикке хăйсем пĕлнĕ пек палăртма тытăннă. Федоров вара темиçе çул иртсен çак ĕçе вĕçленĕ. Чикке çирĕплетекен документа кÿршисем те пăхмасăрах алă пуснă темелле. Çакă çĕнĕ хуçа çине йывăр çĕклем пек тиеннĕ. Сăмахăн вăйĕ çук çав.

Страницăна Лариса НИКИТИНА хатĕрленĕ.

ЧĂВАШ ЕНРЕ – АМĂШĔПЕ АШШĔН ÇУЛТАЛĂКĔ

# Ыр çынран – ырăлăх

**Хăйĕн ĕçченлĕхĕпе, хастарлăхĕпе, сăпайлăхĕпе вăл ыттисене ырă тĕслĕх парать. Унсăр пуçне пуян чунлă, тарăн ăслă, ăшă кăмăллă, таса чĕлхеллĕ. Чăн-чăн арçын теме пулать Вăрнар районĕнчи Кушар-Юнтапа ялĕнче çуралса ӳснĕ Владислав Андреевич Коновалова.**

43 çул автомашина рульне алăран яман вăл. "Чăваш Республикин транспортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ята тивĕçнĕ. "Çул çинче аварисĕр ĕçленĕшĕн" I-III степень значокĕсемпе, Хисеп хучĕсемпе тата ытти наградăпа чысланă.

Паллах, лайăх пулăм ачине ашшĕ-амăшĕнчен куçать. "Çемьере эпир пиллĕкĕн çитĕннĕ. Аттепе анне пĕр-пĕрне хисеплесе, юратса, килĕштерсе пурăнатчĕç. Хăйсем ырми-канми тăрăшнăран пире те ĕçе вĕрентсе ӳстернĕ. Ял-йышпа, кӳршĕ-аршăпа яланах туслă пурăннă. Пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ, анчах уявра ĕçсе супман, шăкăлтатса калаçнă, кăмăлтан юрланă. Аслă пиччĕшĕ илсе панă балалайкăна атте пĕр ĕçкĕ-сикĕрен те хăварман. Ăна сывăхри ялсенче те аван пĕлнĕ", – калаçăвне пуçларĕ Владислав Андреевич.



Ял ачи мĕн пĕчĕкрен ĕçе кӳлĕнет. Коноваловсем картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усранă. Çамрăк Владислав кукамăшĕпе пĕрле ĕне пăхма çӳренĕ, ыррине ватăран нумай вĕреннĕ. Кинемей никама та усал сунса, япăх туса кӳрентермен таса чăваш хĕрарăмĕ пулнă. Кăшт çитĕнсен мăнукĕ юланутпа çӳреме хăнăхнă. "Пĕр вăхăтра атте ферма лашисене пăхатчĕ. Вĕсене ăшă витере тытнă, паха апат çитерме тăрăшнă, мĕншĕн тесен пĕтĕм йывăр ĕçе вĕсем çине тиенĕ. Чĕрне вĕçĕ çӳлелле таврăнасран тата хĕлле ури шăвасран такан çапатчĕç. Шкултан чупса килеттĕм те аттене пулăшма васкаттăм. Витере никам çук чух лашасене кунĕпе юрă юрласа савăнтараттăм. Çав вăхăтран выльăх тухтăрĕ пулас ĕмĕт çуралчĕ", – аса илчĕ ĕç ветеранĕ.

Ял çыннин кил-çурта, хуралтăсене çулсеренех çĕнетсе тăма тивет. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче колхозра машина-трактор сахал пулнă. Çавăнпа унпа усă курмашкăн ял правленийĕнче черет йышăннă. Ашшĕ-амăшĕ ĕç тума транспорт çуккишĕн пăшăрханнине курсан Владислав ĕмĕтне улăштарнă, водитель специальноçне алла илме тĕллев лартнă. Капла вăл сывăх çыннисене ытларах пулăшма пултарнă. "Пирĕн вăхăтра республикăра механизаци енĕпе профессие пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ заведенийĕ нумай марччĕ. Тен, çавăнпа ялти 3 çамрăк инçетри Кăркасстанри Тимертау хулине суйласа илтĕмĕр. Кунти училищĕне ăнăçлă пĕтерсе алла водитель прави илтĕм", – сăмахне тăсрĕ Владислав Андреевич.

Чăваш каччи Тимертау хулинченех салтак тивĕçне пурнăçлама кайнă. "Тăван ялтан çыру илсен малтан ун шăршине кăнелеттĕм. Çуралнă кил, улăх-çаран куç умне тухатчĕç. Атте-анне вĕрентсе каланă сăмахсем ăша килетчĕç: "Ют пурлăха тивмелле мар, тĕрĕс пурăнмалла, çын тепĕр çынна ырă тума пĕлнипе пархатарлă", – хĕсметре тăнă вăхăта та аса илчĕ вăл. Унта та чăваш ятне яман, Тав хучĕсемпе таврăннă.

Ара, ача чухнех ӳт-пĕве пиçĕхтернĕ, аслисене пулăшма, тĕрлĕ вăйă (лапталла, футболла, вăрçăлла) выляма та ĕлкĕрнĕ. Юханшыв хĕрринчен лашапа хăйăр турттарса тăршшĕне, çӳллĕшне сикмелли вырăн йĕркеленĕ. Лум çине трактор урарисем çыхса штанга йăтнă, турник туса ăмăртусем ирттернĕ. Хĕлле тăвайккинчен йĕлтĕрпе, çунашкапа ярăннă... "Халĕ пурнăç лайăх, анчах çамрăксем компьютертан уйăрлаймаççĕ", – пăшăрханса калаçрĕ тăватă мăнук аслашшĕ.

Ӳркенмен çыншăн яланах ĕç пур. Шупашкарти 1312-мĕш автоколоннăра çамрăк çынна техника шанса панă. Пĕрремĕш кунранах вăл тăрăшулăхпа палăрнă. Кĕрхи ĕçсем вăхăтĕнче Чăваш Енри тĕрлĕ кĕтесре сĕм çĕрлеччен тырпул, çĕрулми турттарнă. Юлашки çулсенче "Агрохмель" хуçалăха пулăшнă. Çавăн пекех Тутарстанра, Владимирпа Ульяновск облаçĕсенче çул тунă çĕрте ĕçленĕ. Амăшĕ вĕрентнĕ пек никама та сăмахпа кӳрентермен, усал сунман. Коллективра Владислав Андреевича яланах хисепленĕ.

Паллах, пурнăç çулĕ тумхахсăр иртмен. Юнашар тăванĕсем, юлташĕсем пулни, çут çанталăка юратни йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшнă. Владислав Андреевич халĕ те сывă пурнăçпа туслă: хĕлле йĕлтĕр çине тăрать, çулла шывра ишет, çуран чупать.

"Салтакран килсен атте Мускавран хуткупăс çырăнса илчĕ, çавăнтанпа ăна алăран яман, кĕвви-çемми чуна çĕклет. Çĕнĕ юрă илтсенех астуса юлатăп, пӳрнесем хăйсемех кĕвĕ калаççĕ", – хавхаланса калаçрĕ ĕçпе пиçĕхнĕ арçын.

"Хыçа юлнă çулсемшĕн пач пăшăрханмастăп. Атте-анне панă ăшша, тасалăха, юратăва ачасенче курасса шанатăп", – терĕ нумаях пулмасть хăй çут тĕнчене килнĕ куна паллă тунă Владислав Коновалов.

**Надежда НАЛИМОВА-ЧУДАКОВА.**
**Вăрнар районĕ,**
**Кушар-Юнтапа ялĕ.**

## Йĕкĕрешсем ытларах çуралнă

**2016 çулта Чăваш Республикинче 16538 ача çуралнă, çав шутра 8574-шĕ – арçын ача, 7964-шĕ – хĕрача.** Пĕлтĕр йĕкĕрешсем те виçĕм çулхинчен ытларах кун çути курнă, вĕсен шучĕ 168-а çитнĕ. Унсăр пуçне ултă çемьере çут тĕнчене пĕр вăхăтрах виçĕ ача килнĕ. 2015 çулта унашкал пĕр тĕслĕх кăна пулнă.

Арçын ачасене ытларах Артем, Михаил, Кирилл, Максим, Иван, Роман, Александр, Егор, Илья, Дмитрий ят хунă. Хĕрачасем валли ашшĕпе амăшĕ Анна, Виктория, Дарья, Мария, София, Анастасия, Ксения, Екатерина, Валерия, Елизавета ятсем суйласа илнĕ.

Сайра тĕл пулакан ятсенчен Назар, Марат, Гордей, Прохор, Давид, Тарас, Мила, Элеонора, Руслана, Богдана йышшисене палăртмалла.

## Çамрăк çемьесене пулăшма

**Федерацин "Çурт-йĕр" тĕллевлĕ программин çамрăк çемьесене пурăнмалли çуртйĕрпе тивĕçтерес çум программа шайĕнче пĕлтĕр республикăра 488 çемьене 308,2 млн тенкĕлĕх социаллă тӳлев илме свидетельство панă.** Унпа вĕсем çурт е хваттер туянма (тума) пултараççĕ.

2017 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 486 çемье свидетельствăсемпе усă курса пурăнмалли условисене лайăхлатнă. Пĕтĕмпе 307,2 млн тенкĕ тăкакланă, çав шутра 134,5 млн – федераци, 121,9 млн – республика, 50,8 млн тенкĕ вырăнти бюджет укçи.

Çулталăк пуçламăшĕ тĕлне 2 çамрăк çемье – Вăрнар тата Етĕрне районĕсенче – пĕлтĕрхи свидетельствăсемпе усă курма ĕлкĕреймен.

КОНВЕРТРА СĂНЛАННĂ ПУРНĂÇ

# Чун пушанса юлчĕ...

Çемье ăшши... Пĕр-пĕрне ăнланни, хисеплени, юратни мĕн тери хаклă-çке вăл! Çул иртнĕçемĕн юрату вăй илсе, çирĕпленсе кăна пымалла пек. Мĕншĕн тесен хуйхă-суйхăра, савăнăçра юнашар пулни мăшăр хушшинчи çыхăнăва тĕреклетет çеç. Упăшкипе арăмĕн кирек хăçан та пĕр-пĕрне пулăшма, хавхалантарма тăрăшмалла. Шел пулин те, чылай чухне вара пĕри чăннипех те савать, тепри ун юратăвĕпе пур енлĕн усă курать кăна.

Пĕлĕшĕмпе çемьери лару-тăру пирки калаçса кайрăмăр. Унăн пĕтĕмпех йĕркеллĕ, вĕсем ытлă-çитлĕ пурăнаççĕ, укçа енчен те аптрамаççĕ. Çемьере килĕшӳпе юрату хуçаланать. Анчах ăна çакă çеç çырлахтармасть. Мăшăрĕсĕр пуçне саппасра яланах савни пур унăн. Пĕлĕшĕме кашни кунах «купăста яшки» йăлăхтарать имĕш. Çитменнине савнийĕ хваттерлĕ, унăн кашни сĕнĕвне тивĕçтерекенни пултăр.

Чылайăшĕ çапла пурăнать халĕ. Мăшăрĕсене час-часах улталаççĕ. Ку пулăм мана тĕлĕнтерме те пăрахрĕ ĕнтĕ. Анчах эпĕ, пурнăçран кая юлнăскер, çак «модăна» хăнăхса çитейместĕп.

Упăшкапа 26 çул ытла пурăнтăмăр. Юлашки вăхăтра вăл ниçта та ĕçлемерĕ, сăра-эрех ĕçрĕ. Вăйпитти арçынна çакнашкал кун кунлани намăс пулмалла пек.

Ĕçкĕçпе пурăнса ывăннăран пĕринче япалисене пуçтарса яна ăсатрăм ăна. Пĕр хушă канас терĕм унран. Сывлăх та хавшанăччĕ хамăн. Сиплен- ме те вăхăт кирлĕ-çке. Çавна май яла кайма ерĕçмерĕм. Тĕрĕссипе, чун та туртмарĕ. «Мансăр пурăнса пăхтăр-ха каштах, тен, ăс кĕрĕ», – тесе шухăшларăм. Вăл вара пĕрре те кулянман иккен. Унта кайнă-кайманах савни тупса янă. Хăй пекех сăра-эрех кăмăллакана.

Сиплев хыççăн яла кайрăм, анчах кая юлнă иккен. Ман мăшăр «качча кайнă». «Текех кунта килсе ан çӳре! Халĕ манăн урăх хĕрарăм. Уйрăлмашкăн хут çырма пултаратăн», – терĕ вăл.

Куçĕ çав тери сивĕ. Хăй те пачах урăх, ют çын тейĕн. Эпир унпа чĕрĕк ĕмĕр пурăнман пекех.

Эпĕ ăна пĕтĕм çамрăклăха, юратăва, чун-чĕрене парнелерĕм. Чирленĕ вăхăтра та, йывăр чухне те пулăшнă ялан. Вилĕмрен те пĕрре мар çăлнă. Çемье лавне миçе çул пĕччен туртса пытăм! Çав вăхăтра мĕн чухлĕ куççуль юхтарман пулĕ! Çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрман каççен шучĕ те çук!

Яла кайнă чухне кучченеç те илнĕччĕ. Мĕншĕн тесен мăшăрăн çуралнă кунĕччĕ. Сумкăна пушатрăм та хуняма килĕпе сывпуллашса хулана таврăнтăм. Автобуса ларсан та куççуле чараймарăм, килте те лăплантараймарăм. Чун тăвăлса çитрĕ. Сăнӳкерчĕк альбомне пăхма тытăнтăм. Вăхăтĕнче эпир те килĕшуллĕ мăшăр пулнă. Пурте йĕркеллĕччĕ.

Çак уйрăлу упăшка сăра-эрехе кăмăлланăран пулчĕ. Хаяр шĕвекрен хăтараймарăм ăна. «Симĕс çĕлен» çĕнтерчех! Ĕçекен çынпа пурăнма вара çăмăл мар.

Текех яла ура ярса пусмарăм, мĕскĕнленсе çӳрес темерĕм. Мăшăра унтанпа курман. Телефонпа çеç калаçнă. Хушăран хăй шăнкăравлатчĕ. Кашнинчех уйрăлма хут çырасси çинчен ыйтатчĕ. Тепĕр чухне ман пурнăçпа кăсăкланатчĕ.

Халĕ виççĕмĕш çул пĕччен пурăнатăп. Арçынсем тахçанах интереслентермеççĕ мана. Вĕсене сутăнчăкпа танлаштарас килет. Пурте ултавçă, чее, хыткукар. Хăйсем пирки кăна шухăшлаççĕ. Ямăттине, хатĕррине çеç кĕтсе лараççĕ. Хĕрарăм шучĕпе кăна пурăнасшăн.

Чăн та, хăшĕ-пĕри пурнăçра пĕр çынна çеç юратма пултарать. Эпĕ те мăшăра кăна саврăм. Ăна нихçан та, никампа та улăштарман. Вăл вара мана сутрĕ. Арçынсем хĕрарăма хаклама та, юратма та пĕлмеççĕ пулас.

Таса чунлă юрату çеç çынна телейлĕ тăвать, çунат хушать, вăй-хăват парать.

Чунпа çирĕп пулин те тепĕр чух çунатсем усăнаççĕ. Нимĕн те савăнтармасть, хавхалантармасть мана. Чунчĕре пушанса юлчĕ...

**Валентина ТЮМЕРОВА.**
**Шупашкар хули.**

ХӐТЛӖХ

# Ача ячӗпе килсен

**? Мӗншӗн налук ача ячӗпе килнӗ, вӑл ӗҫлемест-ҫке? Хӑй тӗллӗн налук тӳлеме те пултараймасть.**

**Марина МИХЕЕВА.**
**Шупашкар районӗ.**

Пурлӑхшӑн тата ҫӗршӗн вӗсен харпӑрлӑхҫи шутланакан ҫын тӳлет. Налук хурас йӗркепе вӗсен ӳсӗм ҫулне шута илмеҫҫӗ.

Енчен те ача харпӑрлӑхӗнче пурӑнмалли ҫурт, хваттер, пӳлӗм, дача, ҫӗр лаптӑкӗ е пӗрлехи харпӑрлӑхри пай пулсан вӑл налук тӳлекен шутланать.

РФ Налук кодексӗн 27-мӗш статйипе налук тӳлекенӗн (уйрӑм ҫыннӑн) саккунлӑ представителӗсем – РФ Граждан законодательствипе килӗшӳллӗн палӑртнӑ ҫынсем. Ҫула ҫитмен ачасен саккунлӑ представителӗсен шутӗнче – ашшӗпе амӑшӗ (усрава, опекӑна илнисем те). Шӑпах вӗсен ача пурлӑхӗпе ҫыхӑннӑ ӗҫсене пурнӑҫлама право пур, ҫав шутра – налук тӳлес тивӗҫе те.

Налук тӳлемелли квитанцие харпӑр хӑй тӗллӗн йӗркелеме тата тӳлеме Раҫҫей ФНСӑн электрон сервисӗпе ("Личный кабинет налогоплательщика для физических лиц") усӑ курма пулать.

Сервиса лекес тата регистраци картти илес тесен ҫыннӑн кирек хӑш налук инспекцине (учета ӑҫта тӑратнине пӑхмасӑр) ҫитмелле. Хӑй пурӑнакан вырӑнтине пырсан ҫумра паспорт пулмалла. Ытти инспекцире паспорт тата учета тӑратнине ӗнентерекен номер свидетельстви е унӑн копине кӑтартмалла.

Ҫула ҫитмен ачашӑн ку ӗҫе саккунлӑ представителӗ пурнӑҫлать. Унӑн хӑйпе пӗрле ача ҫурални ҫинчен калакан свидетельство, представитель иккенне ҫирӗплетекен документ тата паспорт пулмалла.

# Тӑкака документпа ӗнентермелле

**? Эпӗ – 3 ушкӑн инваличӗ. Ялта уйрӑм ҫуртра пурӑнатӑп. Ӑна вутпа хутса ӑшӑтма, газ баллонӗ туянма укҫа сахал мар кирлӗ. Хальччен коммуналлӑ пулӑшу тӑкакне саплаштарма компенсаци ытларах тухатчӗ. Пӗлтӗрхи чӳк уйӑхӗнче вара 20 тенке яхӑн кӑна илтӗм. Раштав уйӑхӗнче – тата та сахалрах. Ытса пӗлнӗ тӑрӑх – ман пеккисем компенсацие 700-800 тенкӗ е ытларах та илеҫҫӗ. Манӑн мӗншӗн питӗ сахал-ши? Ҫирӗм тенкӗпе паян пӗр буханка ҫӑкӑр та туянаймӑн.**

**Николай КРЫМЗОВ.**
**Сӗнтӗрвӑрри районӗ,**
**Нарат Чакки сали.**

Сӗнтӗрвӑрри районӗн социаллӑ хӳтлӗх уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ Ольга Львова пӗлтернӗ тӑрӑх – компенсаци виҫи инвалидлӑх ушкӑнӗнчен килмест, вӑл тӳремӗнех коммуналлӑ пулӑшушӑн тӳленӗ укҫа суммипе ҫыхӑннӑ. Унӑн виҫине палӑртнӑ чух ҫуртра официаллӑ миҫе ҫын пурӑннине, унӑн лаптӑкне, мӗнле хутса ӑшӑтнине шута илеҫҫӗ. Анчах норматившӑн 50 процентӗнчен ытла тӳлемеҫҫӗ.

Николай Крымзов, ахӑртнех, килҫурта хутса ӑшӑтма вут-шанка уйрӑм ҫынсенчен туянать. Унашкаллисем мӗн чухлӗ тӳленине палӑртакан хут ҫырса памаҫҫӗ. Енчен те Николай Михайлович вутта документпа тивӗҫтерекен организацирен туяннӑ пулсан социаллӑ хӳтлӗх уйрӑмне тӑратма пултарӗччӗ. Каплла компенсаци те ӳсӗччӗ. Электричество ҫутишӗн кӑна тӑкак пысӑк мар, ҫавӑнпа саплаштару виҫи те пӗчӗк.

ПАХЧАҪӐ



# Юр ытлашши мар

Уй-хирте, сад-пахчара кӑпӑшка юр выртать. Пахчаҫӑшӑн вӑл нихӑҫан та ытлашши пулмӗ. Картише, хуралтӑсене юртан тасатнӑ чухне унпа ӑшӑ юратакан культурӑсене хуплама тӑрӑшмалла. Сӑмахран, кӗл чечекпе клематиса. Йывӑҫ-тӗмӗ, хунавсем тавра юр тултармалла. Ҫакӑ вӗсене шартлама сивӗрен, шӑши-куян сиенлесрен сыхлать.

# Вӑрлӑх тӗрӗслетпӗр, туянатпӑр

Кӑрлач уйӑхӗнче саппасри вӑрлӑха тӗрӗслемелле. Хӑшӗ ытларах юлнине палӑртмалла. Ҫак вӑхӑтра ҫӗнӗ сортсем туянма тытӑнмалла. Пушӑ пакетсене лавккана пӗрле илсен те юрать. Ҫакӑ сутуҫӑн тата хӑвӑрӑн вӑхӑта перекетлӗ.

Вӑрлӑха ҫимӗҫ пиҫсе ҫитнӗ саманта, тухӑҫа, удобрени тӑкакне шута илсе туянмалла. Ҫимӗҫ хӑҫан пулса ҫитессине, хӑш регионра лартса ӳстерниччен, ҫанталӑкран килет. Пакет ҫинче ҫырни час-часах чӑнлӑхран уйрӑлса тӑрать. Унта чи лайӑх условисенче туса илнӗ тухӑҫа кӑтартнӑ. Хаклӑ вӑрлӑх туянса укҫа тӑкма та ан васкӑр.

Кирек мӗнле вӑрлӑха ятарлӑ лавккара илме тӑрӑшмалла. Таварӑн патшалӑх регистрацийӗн сертификачӗ, поставщик документӗнче пулмалла. Пакет ҫинче чӗркенӗ вӑхӑт, усӑ курмалли срок, партипе тавар номерӗсем кирлӗ. Парти номерне алӑпа ҫырмалла, штамп лартмалла. Ют ҫӗршывра кӑларнисен пакетне пурҫӑн ҫиппе ҫӗленӗ. Енчен йӗппе шӑтарнине асӑрхасан, ҫиппи пулмасан туянма тӑхтӑр. Лавккана кайиччен мӗн чухлӗ вӑрлӑх кирлине палӑртмалла. Ытлашши юлни ҫитес ҫулччен шӑтаслӑха ҫухатать.

# Икӗ «чӗре»

«Бычье сердце», «воловье сердце» томат сорчӗсем ячӗсемпе кӑна уйрӑлса тӑраҫҫӗ тейӗн. Ҫиелтен пӑхсан ҫимӗҫӗсем пӗрешкелех. Ҫавна май пахчаҫӑсенчен нумайӑшӗ ӑна час-часах пӑтраштарать. Чӑн та, иккӗшӗ те чӗрене аса илтереҫҫӗ. Анчах пӗр-пӗринчен самай уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Ҫав шутра агротехника енӗпе те. «Воловье сердце» – ир тата вӑтам пулакан сорт, пӗр помидорӗ 200 г таять. «Бычье сердце» кая юлса пиҫет, ҫимӗҫӗ 400 г ҫитет. Ҫавӑнпа пысӑк тухӑҫ илес тесен ку сорта маларах акмалла.

**Пӗтӗмӗшле илсен икӗ сорчӗ те сӗтеклӗ, тачка. Вӗсем ҫиме кӑна юрӑхлӑ, хӗл валли консервлама, йӳҫӗтме каймасть.**



«Бычье сердце»

# Ҫӗрулми вӑрттӑнлӑхӗсем

Упрама хунӑ ҫӗрулми ҫуркунне енне шӑтма, типме тытӑнать. Ӑна ҫуллачченех аван упрас тесен ҫак сӗнӳсемпе усӑ курма сӗнесшӗн.

■ «Иккӗмӗш ҫӑкӑра» ҫӗресрен фитонцид кӑларакан ӳсентӑран пулӑшать. Ҫӗрулмине типӗтнӗ пултӑрапа, армутипе хутӑш тытмалла.

■ Кӑмпа чирӗнчен хӳтӗлеме нӳхрепе, тӗп сакайне лӑсӑллӑ йывӑҫ турачӗсем хумалла.

■ Сухан хуппи, пӗтнӗк юнашар пулсан ҫӗрулми шӑтмасть.

■ Вӑл хаяр тымарӗпе те лайӑх упранать.

Вӑрлӑха уйӑхра пӗр хутран кая мар тӗрӗслемелле.

СЫВЛӐХ

# Лямблирен – варени

Пӗверти лямблисенчен ачана мӗнле пулӑшмаллине нумайӑшӗ пӗлесшӗн. Эпӗ ҫак паразитсенчен хӑтӑлмалли мелпе паллаштарасшӑн. Ун ҫинчен пӗр пӗчӗк ялта илтнӗччӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче унта паллӑ тухтӑрӑн дачи пулнӑ. Кунта пурӑнакансене вӑл ҫаппа сипленме сӗннӗ.

Утӑ уйӑхӗн вӗҫӗнче – ҫурла уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче хыр йӗкелӗ пуҫтармалла. Ку вӑхӑтра вӑл симӗс тата сухӑрпа витӗнет. Ӑна сивӗ шывпа чӳхемелле, пысӑк кастрюле е витрене хумалла, ҫӑлкуҫ шывӗ ямалла (йӗкеле15-20 см хупламалӑх), ҫиелтен хупламасӑр вӑйсӑр ҫулӑм ҫинче 8 сехет вӗретмелле (тӑхтав тума та юрать). Кӑпӑка пуҫтарса илмелле. Ун хыҫҫӑн сӑрӑхтармалла, йӗкеле пӑрахмалла, юлнӑ шӗвек вара эмел шутланать. Анчах ӑна кайран варени пек пӗҫермелле. Енчен те шӗвек ҫур литр юлсан ҫур кг сахӑр хушмалла (1:1 пайпа). Варение 1 сехет хатӗрлемелле. Сипленме кунне



выҫ варла 2 апат кашӑкӗнчен ытла ҫимелле мар.

Пылакскере капла ҫиеймесен апат хыҫҫӑн усӑ курма та юрать. Вӑл сывӑ ҫыннӑн та усӑллӑ. Лямблисемсӗр пуҫне ӳпкене, вар-хырӑма тасататать.

**Валентина УЛЬЯНОВА.**

# Ӳслӗке иртерчӗ

Хӑй вӑхӑтӗнче мана пӗр тухтӑр ӳслӗкрен ҫакӑн пек рецепт сӗнчӗ:

100 г пыл, 100 г сахӑр песукӗ, 100 г тӑварлӑ мар услам ҫу, 100 г сыснан шӑратнӑ сали (тӑварлӑ пулмалла мар), 100 г алоэ сӗткенӗ (аш арманӗ витӗр кӑлармалла), 50 г какао ҫӑнӑхӗ (вӑл пыра ҫемҫетет) илмелле. Пурне те эмаль савӑта ямалла, вӑйсӑр ҫулӑм ҫинче кӑшт ӑшӑтмалла (пӑтратса). Кӑпӑкланма тытӑнсан ҫулӑм ҫинчен илмелле. Сивӗтмелле, кӗленче банкӑна ямалла. Эмеле холодильникра упрамалла, ҫывӑрас умӗн 1 хутчен ӗҫмелле: 1 апат кашӑкӗ хутӑша 1 стакан вӗри сӗтре ирӗлтермелле, кӑшт сивӗнсен ӗҫмелле те утиялпа витӗнсе выртмалла.

Вӑрах хушӑ сипленмелле. Эпӗ, тӗслӗхрен, ҫак хутӑша икӗ хут хатӗрлерӗм. Ултӑ уйӑх нушалантарнӑ ӳслӗкрен тин сывалтӑм.

**Ангелина ЯШИНА.**

# Ӑвӑс хуппи сиплерӗ

**? Цистит (шӑк хӑмпи шыҫҫи) чирӗпе нушаланатӑп. Тухтӑр сӗннӗ эмелсем вӑхӑтлӑха кӑна пулӑшаҫҫӗ. Унран мӗнле сывалса ҫитме пулать?**

**Ксения КУШМАНОВА, Патӑрьел районӗ.**

Эпӗ 64 ҫулта, хӑй вӑхӑтӗнче ҫак чиртен те сипленнӗ. Мана ӑвӑс хуппи пулӑшрӗ. Ку йывӑҫ лайӑх антисептик шутланать, унсӑр пуҫне наркӑмӑшлӑ мар. Унпа цистита сипleме (уйрӑмах вӑтӑ ҫынсемшӗн лайӑх) тахҫанах усӑ кураҫҫӗ. Ҫамрӑк ӑвӑс хуппине ҫуркунне пуҫтарсан аванрах. Ун хыҫҫӑн лайӑх типӗтмелле. Ӑна пӗр апат кашӑкӗ илмелле, икӗ стакан шыв ямалла, 30 минут вӗретмелле. Унтан сӑрӑхтармалла, вӗренӗ шыв хушса малтанхи икӗ стакана ҫитермелле, кунне икшер апат кашӑкӗ апат ҫинӗ чух 4 хутчен ӗҫмелле. Йӳҫӗ пулсан шӗвеке пылаклатма юрать.

**Серафима СЕРГЕЕВА.**

*Асӑрхаттарни: халӑх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усӑ куриччен тухтӑрпа канашласа пӑхмалла.*



# Антибиотик вырӑнне

**Ывӑл ӳпкепе чирлӗ. Пульницара ӑна антибиотиксемпе укол тӑваҫҫӗ. Анчах вӗсене пула ӳт ҫине аллерги тухать. Антибиотиксене халӑх сиплевӗнче мӗнпе улӑштарма пулать-ши?**

**Клавдия ФЕДОРОВА.**

Кун пек чухне хӗрлӗ кӑшманпа йӳҫӗ кӑшман пулӑшаҫҫӗ. 1 хӗрлӗ кӑшмана лайӑх ҫумалла, шывра 30 минут вӗретмелле. Ун хыҫҫӑн вӗтӗ теркӑпа хырмалла, сӗткене марльӑн темиҫе сийӗ витӗр пӑчӑртаса кӑлармалла. Хура йӳҫӗ кӑшман сӗткенне те ҫапла хатӗрлемелле. Вӗсене хутӑштармалла, пыл ямалла (1:1:1 пайпа).

Эмеле холодильникра упрамалла, апат ҫиес е чей ӗҫес умӗн 15-20 минут маларах пӗрер апат кашӑкӗ кӑшт ӑшӑтса ҫимелле. Ҫак рецепт ӳслӗкрен, унран хӳтӗленме те пулӑшать.

## ТĔПЕЛ

### Кукăль

*Чуста валли: 2 çăмарта сарри, 180 г маргарин е услам çу, 1-2 лимон, çăнăх. Кукăль ăшĕ валли: 300 г кăлпасси (кирек мĕнли те юрать), шăлсăр сухан туни, 1 пылак пăрăç. Соус валли: 3-4 апат кашăкĕ майонез, 1 çăмарта, 2 шăл ыхра, 70 г хытă сыр.*

Чуста валли маргарина çăмартапа хутăштармалла, çăнăх, лимон сĕткенĕ ярса чуста çăрмалла (вăл хытăрах кирлĕ). Ăна 3 мм хулăнăш йĕтĕрлесе формăна хумалла. 180 градус вĕрилентернĕ духовкăра çурма пиçиччен тытмалла.

Кукăль ăшĕ валли шăлсăр сухана, кăлпассие – çаврашкан, пăрăça улăм пĕрчи пек турамалла. Хутăштарса корж çине хумалла.

Соус валли майонеза, çăмартана, вĕтетнĕ сырпа ыхрана хутăштармалла, корж çине ямалла. Кукăле 180 градус вĕрилентернĕ духовкăра пĕçермелле. Çиелтен симĕс суханпа илемлетмелле.

### Манник

*Кирлĕ пулать (19 касăк валли): 1 стакан сахăр, 2 стакан манна кĕрпи, 2 стакан кефир, 1-2 чей кашăкĕ ванилин, 3 банан, 1,5 апат кашăкĕ сахăр çăнăхĕ, 1 апат кашăкĕ чуста кăпăшкалатмалли хатĕр, ӳсентăран çăвĕ.*

Манна кĕрпине кефирпа хутăштармалла, холодильникра 1 сехет тытмалла. Унтан сахăр, ванилин, чуста кăпăшкалатмалли хатĕр ярса миксерпа çăрмалла.

Банана касăкпа турамалла. Формăна çу сĕрмелле, çăнăх сапмалла, чустан 2-3 пайне ямалла, унтан – банан касăкне, çиелтен – юлнă чустана. 180 градус вĕрилентернĕ духовкăра 40-60 минут пĕçермелле. Юлнă банана çаврашкан (5 мм хулăнăш) турамалла. Çатмара ӳсентăран çăвĕпе ăшаламалла. Сивĕннĕ манник çине сахăр çăнăхĕ сапмалла, ăшаланă бананпа илемлетмелле.

## Кирлĕ пулĕ

❖ Чустана е крема ванилин хушнă чухне кăштах ăшă шывпа ирĕлтермелле. Çакă ырă шăрша чустара пĕр пек сарăлма пулăшать.

❖ Плитана, духовкăна, кастрюле тасатмалли хутăша килтех хатĕрлеме пулать: 1/4 стакан апат содине 2 апат кашăкĕ водород перекиçĕпе хутăштармалла. Вараланнă вырăна унпа сĕрмелле, 15 минутран çумалла.



❖ Хăш-пĕр мандарин, апельсин, лимон хуппине тасатма йывăр. Ĕçе çăмăллатма вĕсене пĕчĕк хумлă кăмакара 20 çеккунт ăшăтмалла.

❖ Аш фаршне кăштах минерал шывĕ ярса ăшалама пулать. Шыв вĕренĕ май фаршри çу ирĕлет, аш лайăх ăшаланать.

## ЮРАТНĂ ЮРĂ

**Елена Шурту юрлакан «Асамлă тăвĕсем» юррăн сăмахĕсене пичетлесе кăлараймăр-ши?**

**Галина ЛАНДЫШЕВА. Етĕрне районĕ, Йӳçпан ялĕ.**

### Асамлă тăвĕсем

*Хăна юрри*

1. Асамлă тăвĕсем,
Сăпайлă тăванĕсем.
Ĕмĕрне те асран каймĕç
Юрласа савăннисем.
2. Апла тусан та юрать,
Капла тусан та юрать.
Пĕр пакути сывă чухне
Ĕçсе çисен те юрать.
3. Хуратулăн çеçкисем
Пилĕк таран пулас çук.
Хура çӳçсем шуралсан та
Т(ă)вансем сире манас çук.
4. Сăваплă çăлĕсем,
Типтерлĕ тăванĕсем.
Ĕмĕрне те асран каймĕç
Пĕрле ĕçсе çинисем.
5. Аслă вăрман мĕн тĕрлĕ,
Çулçи ешĕл çав тĕрлĕ.
Хамăр т(ă)вансем мĕн тĕрлĕ те
Чĕлхи çемçе çав тĕрлĕ.
6.Асамлă тăвĕсем,
Сăпайлă тăванĕсем.
Ĕмĕрне те асран каймĕç
Юрласа савăннисем.

*Асăрхаттарни: юрă çаврăмĕн юлашки икĕ йĕркисене икĕ хутчен юрламалла.*

## ЧИРКӲ УЯВĔ

# Кăшарни

**Кăрлачăн 19-мĕшĕнче – Турă шыва кĕнĕ кун. Кăшарни сиввисем – чи хаяррисем. Çĕрле тӳпе уçăлса тасалать. Çил-тăман пулсан тепĕр виçĕ уйăхран та çакнашкал çанталăка кĕтмелле (ака уйăхĕнче).**

● Енчен те Кăшарнире пас тытсан çуркунне тулла çак кунра (уяв хăш куна лекнине кура) акмалла.

● Шатăр сивĕ пулсан – çулла шăрăха кĕт.

● Кăшарни кас тӳпере çăлтăр нумайăн çулла кăмпа, майăр тухăçлă пуласса пĕлтерет. Çулла шăрăх пулĕ, çуркунне ир килĕ, кĕркунне вăрăма тăсăлĕ. Ăшă çанталăкпа савăнтарĕ.

● Уяв çĕнĕ уйăхпа пĕр килсен çакнашкал çанталăк пĕр уйăха тăсăлĕ. Кивĕ уйăх вăхăтĕнче пулсан – çуркунне ейӳ вăйлă сарăлĕ.

● Кăшарни умĕн, кăрлачăн 18-мĕшĕнче – сочельник. Раштав умĕнхи пекех ир пуçласа каçчен (тӳпери пĕрремĕш çăлтăрччен) çиме юрамасть. Каçхине чиркӳрен таврăнсан чӳрече, алăк тăррисене пурăпа, кăмрăкпа хĕрес ӳкермелле. Çак кас çăлкуçсенчен, чиркӳрен сăвапланă шыв илсе килмелле. Ĕлĕк вара Кăшарни юрне те пухнă. Ăна куршаксенче тытнă, ирĕлсен унпа пит-куçа çунă. Юра нӳхрепре упранă, вăл ал-урана шăнăр туртнинчен сипленĕ.

● Кăшарнире мĕн ыйтни пурнăçланать теççĕ.

### ХĂÇАН ĔÇМЕЛЛЕ?

Кăшарнире сăвапланă шыва кунĕпех ĕçме юрать. Ытти кунра вара выç варла çеç, ситменнине нумай мар. Чир-чĕр аптратсан та ăна ăша илеççĕ, вăл сывалма пулăшать. Чирлĕ çынна сыпкăмпа тăтăшах ĕçтерсен те аван. Унпа çан-çурăмне сăтăрмалла, ыратакан вырăна компресс хумалла.

### МĔНЛЕ УПРАМАЛЛА?

✓ Сăвапланă шыва кĕленче савăтра упрамалла, турăшпа юнашар.

✓ Ăна холодильникра, ытти апат-çимĕçпе пĕрле тытма юрамасть.

✓ Вăл кил-çуртра сиренĕшĕн чи хаклă япала вырăнĕнче пултăр, çапах ĕмĕр тăршшĕпе упрама кирлĕ мар. Унăн сиплев пахалăхĕ çулталăка пырать имĕш. Анчах та Кăшарни шывĕ мĕншĕн пăсăлманнине никам та калама пултараймасть, çакă çут çанталăк вăрттăнлăхĕ. Сăвапланă шывпа çурта, хуралтăсене, выльăх-чĕрлĕхе, машинăна пĕрĕхмелле.

Ăна темиçе савăтра упрамасан та юрать. Ытларах кирлĕ чухне ахаль шывпа хутăштармалла çеç, унăн пахалăхĕ сыхланса юлать.

### ВАКРА ШЫВА КĔНИ

Кăшарни кас мĕн авалтан вакра шыва кĕнĕ. Çак йăлана халĕ те тытса пыраççĕ. Унта чӳхенни çирĕп сывлăхлă пулма, çылăхсене касарттарма пулăшать иккен. Чи малтан Сурхуринчен пуçласа Кăшарниччен пуçтарăнса юмăç пăхнă, улах ларнă çынсен вакра шыва кĕмеллине палăртнă.

Кăшарнире пăрлă шыва чăмнă хыççăн чирлеместĕн имĕш. Анчах та çак мелпе пĕтĕм çылăха касарттарма май пур-ши? Паллах, çук. Кун пек чухне Турра кĕлĕ туса йăлăнни, ӳкĕнни вырăнлă.

## ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Цикламен



Вăл нӳрĕке кăмăллать, типĕ сывлăша чăтма пултараймасть. Унăн тымарне пĕтĕмпех тăпрапа хупламалла мар, 2/3-мĕш пайĕ çеç çĕрте пултăр. Савăчĕ те пысăках кирлĕ мар.

Çуллахи вăхăтра цикламенăн чылай сорчĕ канать. Çавна май çулçи сарăхать, ӳкет. Кун пек чухне час-часах шăвармалла мар, чечеке уçă, тĕттĕм вырăна куçармалла, хутранситрен шыв сапмалла. Кану вăхăчĕ 2-3 уйăха тăсăлать. Вĕтĕ çулçă тухма пуçласан ăна çутă, уçă вырăна куçармалла, часчасах шăвармалла. Ку вăхăтра урăх савăта куçарса лартма та юрать. Вăл торфа килĕштермест. Ун валли ятарлă тăпра кирлĕ, унта кăштах хăйăр тата перлит хушмалла. Куршак тĕпне дренаж сапмалла.

Шыва куршака мар, ăна лартнă савăта (поддон) ямалла. Унсăрăн чечек тымарĕ çĕрет. Шыв çемçе, ăшă пулмалла. Цикламеншăн пӳлĕмри температура 16 градусран иртмелле мар. Шăрăхра çулçи тăкăнать, вăл канма тытăнать. Тĕрлĕ удобренипе апатлантармалла, анчах шĕвеккипе çеç. Чечек папки тухсан эрнере икĕ хутчен, çеçкене ларсан – уйăхра пĕр хутчен. Ку вăхăтра удобрени шайне чакармалла. Мĕншĕн тесен цикламен тăпрари минерал тăварĕсене питех килĕштермест.

## КИЛ ХУÇИ ХĔРАРĂМНЕ

### Тарпа вараласан

Тарпа вараланнă шурă кĕпене çуса тасатма: çак вырăна апат соди сапмалла, ун çине – водород перекиçĕ. Япалана ун хыççăн çур сехет тытмалла, çумалла.

### Чей хутаçĕ пулăшать



Япалана, атă-пушмака тар шăрши çапсан ăна пĕтерме чей хутаçĕ пулăшать. Тумтире улăштарсан çак хутаçа пĕрле хурăр. Вăл тар шăршине туртса илĕ.

### Юсав умĕн

Кивĕ киçтĕке кăларса пăрахма ан васкăр. Ăна вĕри уксусра çур сехет тытăр, кайран тирĕк-чашăк çумалли хатĕрпе çуса тасатăр, типĕтĕр.

### Çемçе, кăпăшка

Алшăлли çемçе пултăр тесен ăна çунă хыççăн чӳхемелле, кайран ятарлă шĕвекре тытмалла: 10 л шыва 0,5 стакан уксус хушмалла, 5-10 минута алшăллие унта ямалла, каллех чӳхемелле. Унтан тепĕр шĕвек хатĕрлемелле: 10 л шыва 2 апат кашăкĕ апат соди хушса ирĕлтермелле, япалана темиçе минута савăта хумалла, чӳхемелле. Паллах, çак ĕçе вăхăтран вăхăта çеç пурнăçламалла.



## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Кăрлач, 19 – кĕçнерникун | Кăрлач, 20 – эрнекун | Кăрлач, 21 – шăматкун | Кăрлач, 22 – вырсарникун | Кăрлач, 23 – тунтикун | Кăрлач, 24 – ытларикун | Кăрлач, 25 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 8.07 | 8.06 | 8.04 | 8.03 | 8.01 | 8.00 | 7.58 |
| | анать | 15.56 | 15.58 | 16.00 | 16.02 | 16.04 | 16.06 | 16.08 |
| Кун тăршшĕ | | 7.49 | 7.52 | 7.56 | 7.59 | 8.03 | 8.06 | 8.10 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун | 27-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Тараса паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче | Ту качаки паллинче |

ПЕТĔР ХУСАНКАЙ ÇУРАЛНĂРАНПА – 110 ÇУЛ

# Хусанкая хĕл хĕмлентернĕ



Тĕлĕнмелле çакă: кашни талантлă поэтăн çулталăкăн чи юратнă вăхăчĕ пур. Пĕри – çурхи, тепри – çуллахи, висçĕмĕшĕ кĕрхи тапхăра кăмăллать, săввисене ытларах çавна халаллать. Хусанкая хĕл хĕмлентернĕ, хавхалантарнă. Мĕнрен килнĕ-ши çакă? Тен, поэтăн чунĕ пăлхавлă пулнинчен, вăл лăпланса пурăнма пултарайманнинчен? Çил-тăмана та илемлĕ сăнарлать.

Çакна ĕненес тесен «Раççейĕм» поэмăн пĕрремĕш сыпăкне çеç вуласа пăхар-ха. Авторĕпе çуммăн ларас, унпа ĕмĕтленес килет.

